# УХСАЙ ПОЭЗИЙĔНЧИ МЕЖДОМЕТИСЕН ТĔСЛĔХĔСЕМ

Кирек хăш чĕлхере те кăмăл-туйăм хусканнине палăртмалли кĕске те витĕмлĕ сăмахсем пур, вĕсене грамматикăра междомети (чăвашла чĕвĕ е кăмăлчав) теççĕ. Калăпăр, çын шăннине пула "Ы-ы-ы, сивĕ! Шăнса хытрăм пĕтĕмпех" теме пултарать. Ку тĕслĕхре *ы-ы-ы* шăннине ят ламасăр тӳреммĕн кăтартакан сăмах, туйăм чĕвви пулать. Паллах, çапла пĕлтерни итлекенĕн шухăш-кăмăлне хăвăртрах пырса хускатать, вара вăл шăннă çынна ăшăтас тесе ăшталанма пуçлать.

Чăваш çыравçисем литературăра чĕвĕсемпе анлă усă кураççĕ. Я.Г.Ухсай пултарулăхĕпе тĕплĕнрех паллашсан эпир ун поэзийĕнче чăваш чунне уçса кăтартма, пурнăçа чĕррĕн сăнланине тата геройсен калаçăвне чĕлхен тĕрлĕ илемлĕх мелĕсене кĕртнине асăрхатпăр. Поэтăн "Кĕлпук мучи" поэмăна, "Ту урлă çул" сăвăлла романа тата "Хура тăпра. Суйласа илнисен" пĕрремĕш томне пăхса тухасшăн. Тишкерсе тухнисенче чĕвĕсем йышлă, вĕсем хайлав чĕлхине хăйне евĕр сĕм кĕртеççĕ.

Чĕвĕсен пĕлтерĕшĕ контекстра çеç палăрать, çавăнпа вĕсене сăвă çаврисем тăрăх тишкерсе пырăпăр. Тытăмĕ тĕлĕшĕнчен чĕвĕсем ытларах пĕр сыпăклă: *эй, эх, ой, ах, ай, ы-ых...*

Тĕслĕхрен:

— *Эй*, патша, сыхла пире! —
Теççĕ те чылай хресчен...

(*Кĕлпук мучи, 27 с.*)

Ку тĕслĕхре пĕр сыпăклă *эй* сăмах чĕнĕве пĕлтерет, патшана чĕнекенсем хăйсене сыхлама хистенине кăтартать. Пĕр-пĕр эмоциллĕ туйăма палăртма пĕр

сыпăклă чĕвĕсене вĕçĕн-вĕçĕн калаписем тĕл пулаççĕ, ун пек чухне вĕсене дефиспа уйăрса çыраççĕ:

– *Эй-эй-эй*! — тесе кайран
Кăшкăрать тарçисене.

*(Кĕлпук мучи, 31 с.)*

Нумай çынна пухăнма чĕнnĕ чухне чĕвĕсене виçĕ хут каласан сасă инçерех саланать, итлемс хистет. Чăнах та, тарçăсем пухăнаççĕ:

Картаран *чи-чи* çерçи
Тухнă евĕр, сехрине
Хăпартса тарçи-тĕрçи
Пухăнать патша умне.

Ухсай поэзийĕнче мăшăр сăмах тытăмĕ евĕрлĕ чĕвĕсем те сахал мар:

*Ай-хаях*, вĕçсе каятăн
Пурпĕр хăвăн йăвунтан.

*(Çăкăр кăвапи, 210 с.)*

*Ай-вай*! — тесе юрлатчĕ аншĕ,
Кĕпе çĕлетчĕ амăшĕ.

*(Силпи енчи çилсем, 62 с.)*

*Ах-ха-хак* та *ах-ха-хак*,
Çапăнма тата пăртак.
Пар-ха эсĕ, Уртемей,
Пĕр курка тулли телей!

*(Кĕлпук мучи, 164 с.)*

Ку çаврари темиçе сăмахлă междомети юпашар йĕркепе рифмăланать тата шалти рифма пуррине палăртать. Пĕр йышши сасăсем янăрани (аллитераци) милĕкпе мунчара çапăннин кĕвĕллĕ сассине вăйлатать, [*а*] уçă сасă [*х*] сасăпа çыхăнни сăвва янăравлăх кӳрет.

*Ай-ну*, *ай-ну*, паттăр та
Ташлама хăта!
Йăкăш-йăкăш, тăпăртăк
Авăнать кăна.

*(Кĕлпук мучи, 144 с.)*

Ку тĕслĕхри междомети кĕвĕ çемĕллĕ илтĕнет, *ай* тĕлĕннине палăртать пулас, *ну* чĕвĕ вара маттур ташлама хистенине кăтартать.

Пуплеве туйăмлăрах тăвас тĕллевпе Ухсай Яккăвĕ хайлавсене тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен пулнă чĕвĕсене кĕртет. Ун пек сăмахсем хăйсен тĕп пĕлтерĕшĕсене çухатса хайлав контекстĕнче чĕвĕ пулаççĕ. Калăпăр:

Те юмах, те урмăш тĕлĕк
Пуçланать-ши? *Ай-тур-тур*!

*(Ту урлă çул, 60 с.)*

Арăм килнĕ те — *ах* турă!
Алăка хаплаттарать.

*(Ту урлă çул, 86 с.)*

*Ай-тур-тур! Ах* турă! междометисем тĕлĕннине тата тарăхса каланине пĕлтереççĕ. Çак япала ятĕнчен пулнă чĕвĕсем хайлаври сăпарсен кăмăл хусканăвне витĕмлĕрех туйса илме пулăшаççĕ.

Ухсай поэзийĕнче урăх чĕлхерен илнĕ тĕслĕхсене те палăртмалла.

*Хуш бул*, Ахмет агай, кунакăм,
Мăнда буласăн бик сирек.
(Сыв пул, Ахмет пичче, хăнаçăм,
Кунта пулатăн пит сайра.)

*(Кĕлпук мучи, 116 с.)*

Курка йăтар калаçнă майăн,
Ĕçер те тӳнтерер унтан.
*Эйде*, Ахмет агай, йăрлайăк
Акидĕл буйă турăшта!
(Айта, Ахмет пичче, юрлатпăр
Шур Атăл тăрăхĕ çинчен.)

*(Кĕлпук мучи, 122 с.)*

— *Ой, распуй!* — теме пуçларĕ
Хăрăк чунлă староста.
Кăмăлне санне каймар-и
Ху пуçланă туй кунта?

*(Кĕлпук мучи, 54 с.)*

*Ой, распуй!* чĕвĕ ĕç ăнсăртран пулнипе вăйлă хумханнине, хытă хăранине палăртать, çавăнпа кăшкăру палли лартнă.

Яков Гаврилович поэзире кăмăллăх чĕввисемпе анлă усă курать. Вĕсемпе вăл геройсен чĕлхе культурине, этикетне палăртать, калас шухăша сăнарлă çыхăнтарать. Эпир вĕсем урлă геройсем пĕрпĕрне кăмăлласа калаçнине, тав, хисеп тунине, телей суннине тата ыт. те сисетпĕр. Акă, Кĕлпукпа Уртемей хутшăнăвĕнчен:

– *Чим*-ха, тусăм аллине
Çакланать иккен телей, —
Тĕрĕ те Кĕлпук çумне
Пырса ларчĕ Уртемей.

- Ачасем, уй-хир кулачĕ
Тупнă пултăр! — тетĕн те:
- *Кил, килях!* — тесе калаççĕ
Çамрăк тусăмсем пурте.

- *Тав сана,* сержант юлташăм!
Паттăр çын, герой, сывал! —
Терĕ куккăм пек ачашшăн
Питĕ пысăк генерал.

Междометисен (чĕвĕсен) пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне кура тĕпчевçĕсем лексикăра хистев пĕлтерĕшлисем пуррипе палăртаççĕ, вĕсене уйрăм ушкăна кĕртеççĕ. Хистев чĕввисем çынна тата выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке хистекеннисем пулаççĕ:

- Староста суйлас! *Эй-эй!*
*Эй,* тухса калаçăр! —
Тенĕ хыççăн Уртемей
Сикнĕ-тăнă харсăр.

*(Кĕлпук мучи, 40 с.)*

Выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке чĕннине (йыхăрнине) тата хăваланă чух калаканнисем:

Юрамасть *кăшша!* теме те,
Хÿтерме те, куç уçма...

Кĕтÿ яла кĕр-кĕрсе
Çăра тусанлă урамра
*Му-му* та *мекекек* кĕвви
Каланă хыççăн ĕнесен
Тулли çиллисене суса

Витресене янратнă чух
Ялта çÿрерĕ сĕт шăрши.

*("Кĕлпук мучи" поэмăран)*

Пĕр-ик сăмах чĕвĕ темипе çыхăнтарса Ухсай поэзийĕнчи рифма пирки калăпăр: "*Ах-ха-хак та ах-ха-хак* // Çапăнма тата пăртак" йĕркери сасăсене сапаланса кайма памасть, шалти рифма туса вĕсене çыхса хурать. Поэт хайлавĕсенче хĕресле, мăшăр, çавра рифмăсем тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, хĕресле рифма:

Ватăлсан та, ман ăс карчĕ
Çитеймерĕ-çке. *Эй-эй!*..
Калаçса килне уттарчĕ
Пирĕн ватă Уртемей.

Ухсай Яккăвĕн поэзийĕнче чĕвĕсен йышĕ сахал мар. Вĕсем поэзи чĕлхине илемлетмелли функципаллă мелсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Автор чĕвĕсемпе сăвă чĕлхине кĕвĕлĕх кĕртет, сăнарлă тăвать тата лирика геройĕн чун хусканăвне уççăн палăртать. Чĕвĕсем ытти пуплев пайĕсенчен уйрăм тăнипе усă курса поэт сăнарсен шухăш-кăмăлне тĕрлĕ енчен палăртать, рифмăпа ритм çыхăнăвне вăйлатать.

**Геронтий НИКИФОРОВ,**
Г.Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци лицейĕнче вĕрентекен